Шупашкар район хаçачĕ

# ТĂВАН ЕН

1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

130 (9423) № ⁂ 2007 çулхи ноябрĕн (чӳк уйăхĕн) 14-мĕшĕ. Юн кун ⁂ Хакĕ ирĕклĕ

## УЯВРАН РАЙОН МАШИНĂПА ТАВРĂНЧĔ

***Çур миллиона яхăн тенкĕпе таврăнчĕ пирĕн район Ял хуçалăхĕнче тата тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен республикăри уявĕнчен. Кунсăр пуçне тата вăл çĕнĕ йышши УАЗ машинăллă пулса тăчĕ.***

Пуху ноябрĕн 9-мĕшĕнче оперăпа балет театрĕнче иртрĕ. Уява ***ял хуçалăх ертӳçисенчен тата ытти хисеплĕ çынсенчен тăракан районти сумлă делегаци хутшăнчĕ, йыша район пуçлăхĕ А.П.Князев*** ертсе пычĕ.

"Алран кайми аки-сухи" юрăпа уçăлчĕ уяв. Тăван халăхăмăрăн авалхи çак юрри янăранă чух зал ура çине тăчĕ. Унтан сцена çине ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ М.Игнатьев хăпарчĕ. Вăл ял хуçалăхĕнчи кăçалхи ĕçсене пĕтĕмлетнĕ май çĕр çыннишĕн çанталăк условийĕсем ансат пулман пулин те хресчен тăрăшса вăй хунине палăртса хăварчĕ. Агропромышленность комплексне аталантарассипе республикăра çине тăраççĕ. Ку вăл Чăваш Енре патшалăх политики пулса тăнă. Кун çумне тата çĕршывра АПК аталанăвĕ çинчен приоритетлă нацпроект йышăнни те пĕтерĕшлĕ.

Тĕш тырăна кăçал республикăра гектар пуçне вăтамран 19,2 центнер туса илнĕ, пӳлмене 390 пин тонна пухса кĕртнĕ. Тĕш тырă культурисене илессипе палăрнисене те асăнчĕ вице-премьер. Ку йышра – Елчĕк, Вăрнар, Пăрачкав, Етĕрне районĕсем. Сĕт тата аш туса илессипе кăçалхи тăхăр уйăхра пĕтĕрхи çак вăхăтри танлаштарулла тапхăртинчен аванрах ĕçленĕ. Сĕт сăвассипе республика шайĕнче Муркашсемпе пирĕн районсем паларăççĕ.

Тыр-пул ăстисене чыслама, вĕсене ырă сунса саламлама пысăк хăна – республика ертӳçи Н.Федоров – хутшăнчĕ. Вăл чăваш ялĕсенче юлашки çулсенче пулса иртнĕ ырă улшăнусем пирки чарăнса тăчĕ. Ялти специалистсене çурт-йĕр тума е туянма республика хысиччен пĕтĕр 250 миллион тенке яхăн укça уйăрнă. Республика пуçлăхĕ тепĕр ырă хыпар та пĕлтерчĕ. Н.Федоров Президент шухăшĕпе, ялти çынна клуб кирлех. Çав учреждениесене юсаса çĕнетесси, аталантарасси çинчен ятарлă Указ алă пуснă Чăваш Ен ертӳçи. Çак лантарса пыракансене, районсем пекех, виçĕ зонăна пайланă. Çурçĕр зонăра ***"Приволжское" вĕренӳ хуçалăхне*** (директорĕ – Г.Егоров) палăртса, 75 пин тенкĕ премипачĕç.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

***«Чувашнефтепродукт» представителĕ çĕнĕ машинăна тивĕçнипе район пуçлăхне А.Князева саламлать (машини – хыçалта).***

документа пурнăçлама çитес вăхăта 200 миллион тенкĕ укça уйăраççĕ.

Производствăра малта пыракансене чысланă самант та асра юлмалла пулчĕ. Уйрăмах пирĕн районшăн тесен те йăнăш мар. Пĕрремĕшĕнчен, район хăй, иккĕмĕшĕнчен, уйрăм предприятисем числава тивĕçрĕç. "АПК аталанăвĕ" нацпроекта аван пурнăçланăшăн, ял хуçалăх производствине тухăçлă аталантарнăшăн уйрăм районсене палăртрĕç. Виçĕ зонăна уйарнă вĕсене. Кăнтăр зонăра Патăрьел, вăтам зонăра Вăрнар районĕсем малта пулсан, ***çурçĕр зонăра – эпир.*** Çавăншăн район Диплома тата 130 пин тенкĕ премие тивĕçрĕ.

Хуçалăхсенчен пирĕн районти тăватă предприятие числарĕç. Ял хуçалăх производствине тухăçлă аталантарнăшăн... Хупă вырăнта пахча çимĕç туса илессине ӳстерсе пынипе ***"Ольдеевская" агрофирмăна*** (гендиректорĕ – Е.Беликова), какай туса илессипе ***"Чăваш бройлерĕ" акционерсен обществине*** (В.Николаев), ЧР Президенчĕн АПКра реформăсене аталантарасси çинчен калакан 2001 çулхи Указне ăнăçлă пурнăçланăшăн ***"Сувар-2" ТП" ОООна*** (А.Никаноров) Диплом тата 50-шер пин тенкĕ преми пачĕç.

Анчах числав кунпах вĕçленмерĕ-ха. Пирĕн район "Чăвашнефтепродукт" обществăпа килĕштерсе ĕçлет. Муниципаллă тата ял хуçалăх предприятийĕсем асăннă обществăран бензин тата сĕрмелли-çунтармалли материал нумай туяннă. Асăннă предприяти çавăншăн района УАЗ машина парнелерĕ.

В.ЭВЕРККИ.

## АННЕ КУННЕ ПАЛЛĂ ТĂВĔÇ

Тĕнчери чи çывăх çын – анне. Çавна май çулсерен Анне кунне ирттересси йăлана кĕрсе пырать. Вăл ноябрĕн 25-мĕшĕнче пулать. Ял тăрăхĕсенче паллă тунисĕр пуçне ăна район шайĕнче те йĕркелеме планлаççĕ.

Район шайĕнче пурĕ 150 хĕрарăм пулĕ. Малтанах, план тăрăх, «Улăп» спортпа сывлăх комплексне кĕрсе кураççĕ, унтан Шупашкарти Амăш монуменчĕ патне çитĕç. Хыççăн çул «Волжанка» туркомплекса выртмалла. Кунти экскурси, пысăк концерт пулать. Тĕл пулу çавра сĕтел йĕри-тавра пухăннипе вĕçленмелле, çапла йышăнчĕç октябрьте иртнĕ хĕрарăмсен канашĕнче.

А.АЛИНИНА.

## ТЕМĔН ТЕ ПĔЛТĔМĔР

***Иртнĕ эрне кун кăнтăрла хыççăн 2 сехетре Налук службин районти çурчĕ умĕнче çамрăксем нумайăн тăнине иртсе каякансем асăрхарĕç пуль. Кунта вăл вăхăтра Уçă алăксен кунĕ иртрĕ.***

Н.Шелихова преподаватель ертсе пынипе Шупашкарти планпа экономика колледжĕнчен 50 яхăн студент килнĕ. Районти налук инспекцийĕн ертӳçин çумĕ Н.Демидова кунти система, кодекс пирки тата налуксем çинчен пĕтĕмĕшле каласа кăтартнă. Уйрăм начальникĕ И.Головко ИНН çинчен ăнлантарнă, ыйтусене хуравланă. Инспекци ертӳçин тепĕр çумĕ Л.Романова «конвертри ĕç укçи» саккуна пăхăнса тăманнине пĕлтернĕ.

Миçе çултан предприниматель пулса ĕçлеме юранине те, налук инспекторĕсем мĕнле йĕркепе ĕçленине те – темĕн те пĕлтĕмĕр эпир çак кун, тенĕ студентсем каяс умĕн.

А.СУСМЕТ.

## КИЛОГРАММ ЫТЛА ӲТ ХУШАÇÇĔ

Шăнкас ялĕнчен вырăнти сĕт-çу фермине хăнахнă сукмака çичĕ çул ĕнтĕ такăрлатать Т.М.Федорова. Малтан та ку хуçалăхрах ĕçленĕ-ха вăл, анчах бригадăра. Кайран, фермăна вырнаçнă хыççăн, унти ĕçе те хăвăрт хăнăхнă, паян вăл мăйракаллă çамрăк выльăха пăхать.

Çамрăк ĕне-выльăх ӳт хушассипе Тамара Михайловна кăтартăвĕ республика шайĕнче те палăрать. Талăксерен пĕр килограмм ытла ӳт хушаççĕ унăн ушкăнĕнчи пăрусемпе вăкăрсем. Ултă уйăхченхи вăкăрсем октябрьте, сăмахран, талăксерен 1365 грамм самăрăлнă.

В.ТИТОВА.

## КĂВАК ÇУЛĂМ ÇЕМЬЕСЕНЕ САВĂНТАРНĂ

Ирсерен иртекен планеркăран тухса ĕлкĕреймерĕм, алăк патĕнче çамрăк хĕрарăм кĕтсе тăрать. "Эп сирĕн патăраччĕ, хамăн савăнăçа хаçат урлă пĕлтерес килет", – терĕ вăл.

Кӳкеçри Советски урамĕнче 75-мĕш çуртра пурăнать иккен çамрăк. "Ипотекăпа эпир унта хваттер илтĕмĕр. Çурчĕ пирĕн 5 подъездлă, 70 хваттерлĕ. Ытларах çамрăк мăшăрсем пурăнатпăр. Çурта кăçал хута ячĕç, хăшĕпĕри пурăнма та куçрĕç. Ку юрĕ-ха, иртнĕ эрнерен пирĕн çурта газ пама пуçларĕç. Тинех ăшă вырăна пурăнма та куçăпăр ĕнтĕ", – савăнăçне пытараймасть çамрăк хĕрарăм. Хушаматне каламарĕ пулин те, унта ĕçлекенсене тав тума ыйтрĕ. "Чувашсетьгаз" тулли мар яваллă обществo ĕçченĕсем – Александр Витальевичпа Галина Андреевна Никифоровсем – кăвак çулăма вĕсен хваттерĕсене çитерессипе лайăх ĕçленĕ иккен. "Вăхăтлă, çур эрне хушшинче пур подъезда та газ çитерчĕç. Çуртра пурăнакансем тем пек савăнчĕç", – терĕ вăл.

А.АРДАЛИОНОВА.

## “ЭПĔ ПУР, ЭСĔ ПУР"

Районти тĕп библиотека халăха усă кӳрекен учрежденисен хушшинче республикăра ирттернĕ «Эпĕ пур, эсĕ пур» ятлă конкурса хутшăннă. Вĕренӳ министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, унта 4 номинацие 8 районпа 4 хула 22 ĕç тăратнă. Пирĕн библиотека ĕçченĕсем вара "Çул çитмен ачасен клубĕсем" номинацире иккĕмĕш вырăна тухнă.

Çак çитĕнӳ çинчен нумаях пулмасть иртнĕ çамрăк специалистсен слетне пухăннисем те пĕлчĕç. Ун чухнех библиотека ĕçченĕсене иккĕмĕш степеньлĕ çак Диплома тыттарчĕç.

А.СУСМЕТ.

Ĕç укçи

## ПАРĂМЛИСЕМ САХАЛЛАННĂ

Кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче республикăри агропромышленность комплексĕнчи вăтам ĕç укçи 3801,3 тенкĕпе танлашнă. Пĕлтĕрхи танлаштарулла тапхăртинчен вăл 54,9 процент пысăкрах. Çак отрасльти вăтам шалуран пысăкрах тӳлекен районсен пиллĕк: Вăрмарсем (3906,0 тенкĕ), Канашсем (4177,0 тенкĕ), Патăрьелсем (4218,1 тенкĕ), Çĕмĕрлесем (4372,2 тенкĕ) тата пирĕн район (6596,1 тенкĕ).

Çак уйăхăн пуçламăшĕ тĕлне илсен, тепĕр лайăх ен те сисĕнет: ĕç укçипе парăмлă хуçалăхсен шучĕ иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 87,1 процент чакнă, халĕ вĕсем пĕтĕмпе те тăваттăн çеç.

В.АВЕРКИЕВА.

Утăм хыççăн утăм

## КУЛЬТУРĂНА АТАЛАНТАРМА

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче Чăваш Ен Президенчĕ Н.Федоров "Чăваш Республикинче ялти культура учрежденийĕсене аталантарас енĕпе пурнăçламалли мерăсем çинчен" Указ кăларнă. Унпа ЧР Министрсен Кабинетне республикăн "Чăваш Ен культури: 2006-2010 çулсем" тĕллевлĕ программине улшăнусем кĕртсе ялти культурăпа кану учрежденийĕсене хальхи техника хатĕрĕсемпе васкавлăн тивĕçтерме, культурăпа кану учрежденийĕн ĕçхĕлĕн тĕслĕхлĕ стандартне çирĕплетме, учрежденисене аталантарма уйăракан укçаран культура ĕçченĕсене тухăçлă хавхалантарма, вĕсен ĕç укçине палăртас енĕпе сĕнӳсем хатĕрлеме хушнă. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2008 çулта культура çурчĕсене юсама, вĕсене энергипе, çĕнĕ сĕтел-пуканпа тивĕçтерме, вĕсен таврашне тирпей-илем кĕртме сĕннĕ.

Иртнĕ шăмат кун Н.Федоров федераци министрĕсемпе телефонпа калаçнă хушăра РФ культура тата спорт ертӳçисем М.Швыдкойпа В.Фетисов Чăваш Ен пуçлăхне çĕнĕ ĕç пуçласа яма – халĕ республикăра тăвакан физкультурăпа спорт комплексĕсенчех кинозал, сцена тата клуб пӳлĕмĕсем туса хăварма сĕннĕ. Президент Правительствăн иртнĕ тунти кунхи ларăвне ертсе пынă чухне: "Эпир çак çĕнĕ проектсене пурнăçлăпăр, укçи вара – федерацирен", – тенĕ. Вĕсене пурнăça кĕртес енĕпе ĕçлеме ЧР строительство тата культура министрĕсене А.Гончаровпа Н.Володинана хушнă.

### Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

***Юн кун, ноябрĕн 14-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **-2** çĕрле **−8**

***Кĕçнерни кун, ноябрĕн 15-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк, кăнтăрла **-3** çĕрле **−6**

***Эрне кун, ноябрĕн 16-мĕшĕ***
юр çăвать, кăнтăрла **-3** çĕрле **−4**

***Шăмат кун, ноябрĕн 17-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **-4** çĕрле **−8**

Ял аталанăвĕ

# ЯЛА ГАЗ ТАТА ÇУЛ ÇИТРĔ – ПУРĂНАС КИЛЕТ

САВĂННИНЕ ПЫТАРМАРĔÇ КИПЕЧКАССИСЕМ

***«Яла çул пулать тесен малтан ĕненмерĕмĕр. Кайран хăйăр тата ытти материал турттарма пуçласан вăрттăн хĕпĕртерĕмĕр. Асфальт сарнине курсан савăннипе куççуль тухрĕ», – кăмăл-туйăмне пытармарĕ Вăрман-Çĕктер ял тăрăхне кĕрекен Кипечкассинче пурăнакан З.П.Кудряшова учительница.***

Çула савăнăçлă лару-тăрура выçсарни кун, ноябрĕн 11-мĕшĕнче, уçрĕç. Унта ***район пуçлăхĕ А.П. Князев, унăн çумĕ – капиталлă строительствăпа ЖКХ управленийĕн пуçлăхĕ В.М.Сидоров, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ çумĕ В.П.Мидуков, Чăваш Енĕн ортопедипе протез предприятийĕн директорĕ Ю.С.Ефиркин,*** çула сарнă ***«Дорсервис» подряд организацийĕн директорĕ В.А.Жестянкин тата ыттисем*** килсе çитрĕç.

Савăнăçлă самант ячĕпе ăшă сăмах калакансем йышлăн пулчĕç. Район тата республика аталанăвĕ куçкĕрет те, пурте çавна кăмăлтан палăртрĕç. «Кăçал пирĕн районта 40 километр ытла çул тумалла, килес çул валли тепĕр 16 километр юлать, – терĕ район пуçлăхĕ А.П.Князев. – Районти 50 ял çулсăр пулнă. Анчах республика Президенчĕ ятарлă Указ йышăннă хыççăн кашни ялах çул çитет».

Хĕрлĕ хăйăва каснă хыççăн вырăнти юрă-ташă ăстисем темиçе номерпе савăнтарчĕç. Хаваслă ял халăхĕ тăваллăн алă çупрĕ. Вĕсемпе пĕрле хăнасем те, аслисемпе пĕрле ачасем те хĕпĕртерĕç. Хĕрлĕ хăйăва Сергей Русаковпа Георгий Смирнов тантăшсем (вĕсем иккĕшĕ те тăваттăмĕш класра вĕренеççĕ) тытса тăчĕç.

Яла çул тăвассипе В.К.Матюшкина активист та хăйĕн тӳпине хывнă. Ăна çавăншăн ял халăхĕ тав турĕ, район пуçлăхĕ вара Хисеп грамотипе чысларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче «Пирĕн Президента Н.В.Федорова хăйĕн чăваш халăхне сума суса, чунне парса ĕçленишĕн Турă таса çирĕп сывлăх парса çеç тăтăрччĕ», – терĕ. Ял халăхĕн ячĕпе вăл район пуçлăхне А.П.Князева тата ыттисене тав турĕ. «Çул туни кашни хуçалăхшăн, ял çыннишĕн пысăк пулăшу», – çаплараx хакларĕ вăл.


Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

*Халăхĕ çанталăка пăхмасăр нумай пухăнчĕ. Сулахайран 4-мĕшĕ – А.Князев.*

Çула уçнă кун ытти çынсен шухăш-кăмăлне пĕлме те кăсăклă пулчĕ. Хаваслăха çак ялти И.Г.Романовпа Н.С.Антонова пенсионерсем те пытармарĕç. «Килте газ пур, яла çул çитрĕ. Халь вилес те килмест», – терĕ Нина Степановна.

В.ЭВЕРККИ.

Перекет банкĕ

# ШАННĂШĂН – ВУНĂ ПИН ТЕНКĔ

***Раççей Федерацийĕн Перекет банкĕ пуçланса кайнă куна халалласа нумай çул банкпа çыхăну тытакан вкладчика саламласси йăлана кĕнĕ. Перекет банкĕн Кӳкеçри уйрăмĕн управляющийĕ А.Н.Алексеева пĕлтернĕ тăрăх, вăл 2002 çултанпах пырать. Хальхинче вĕсем ноябрĕн 9-мĕшĕнче хăйсем патне Кӳкеçре пурăнакан Г.Н.Никитинана чĕнчĕç.***


Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

***Конверт тата чечек çыххи – вкладчика. Сулахайри – А.Алексеева.***

Гликерия Никитична 80 урлă каçнă ĕнтĕ. Ĕçлесе илнĕ укçана банка перекетлеме хума пуçлани те 30 çул ытла. «Астăватăп, пĕрремĕш хут 5 тенкĕ килсе хунăччĕ. Ун чухне пысăк укçах пулнă ĕнтĕ. Пус çумне пус хушса укçа пухма тăрăшнă. Килте пахча çимĕçсем туса илсен ытлашшине кайса сутаттăмăр. Укçине, паллах, банка хунă. Халь пенси укçине унтах тытатăп», – тет кинемей. Мăшăрĕпе, Вениамин Александровичпа, хĕрпе ывăл ура çине тăратнă. «Хамăра валли мар ĕнтĕ, ачасене тата мăнуксене, вĕсем пирĕн тăватăн, валли пухатпăр халь укçине», – тет Г.Никитина. Вăтă банка килсен ăна ăшшăн кĕтсе илни çинче чарăнса тăчĕ. «Вăрçса тавлашса курман пĕрре те», – тет вăл. Укçа та кунтанах куçарать кинемей. Хăш чухне лотерея та выляса илет.

Перекет банкĕн управляющийĕ А.Алексеева шаннăшăн, нумай çул хăйсем патĕнче укçа усранăшăн ăна валли ятарлă парне те хатĕрленĕ. Кунти ĕçченсемпе пĕрле Г.Никитинана 10 пин тенкĕ укçа тыттарчĕç. Кинемей чăтса тăраймарĕ: «Ай-уй, эсир мана кун пек пуйтарсах яратăр», – терĕ. Савăнăçлă тĕл пулу сĕтел хушшинче чей ĕçнипе вĕçленчĕ.

А.СУСМЕТ.

Суйлав умĕн

***Иртнĕ кĕçнерни кун «Чăваш бройлерĕ» фабрикăра анлă пуху пулни çинчен, унта республика халăхне В.В.Путина майлă чĕнсе калани çинчен пирĕн хаçат пĕлтернĕччĕ.***

***Сăмах мĕн çинчен пыни çинчен тепĕр хут аса илтеретпĕр. Çывăх вăхăтра (декабрĕн 2-мĕшĕнче) РФ Патшалăх Думине депутатсем суйлатпăр. Патшалăх хăш çул-йĕрпе малалла аталанасси çак суйлаври нумай килет. Шăпах çакна тĕпе хурса «Чăваш бройлерĕ» чăх-чĕп фабрикине пухăннă халăх хăйсем В.В.Путин Президент тытса пыракан çул-йĕре малашне те никĕсе хывма чĕннĕ, ку тĕлĕшпе пуçару ушкăнĕ йĕркеленĕ.***

***Паян унăн Чĕнĕвне туллин пичетлетпĕр.***

## ПУÇАРУ УШКĂНĔ РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ПРЕЗИДЕНЧĔН В.В.ПУТИНĂН ÇУЛ-ЙĔРНЕ ЫРЛАСА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

*Эпир çĕршывшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ историлле пулăм умĕнче пурăнатпăр: кĕçех – Патшалăх Думин суйлавĕ. Çитес вăхăтра кашни çыннăн Раççейĕн тĕнче умĕнчи сумне, патшалăхне хăйне тата политикăпа экономикăри суверенитетне çирĕплетессишĕн тытса пыракан çул-йĕрне мĕнле хакласа йышăннине палăртма тивет.*

*Пирĕн çĕршыва ырă улшăну чылай пулчĕ: экономикăра, халăх пурнăçĕнче палăрмалла ӳсĕм пур. В.Путин пуçарăвĕпе йышăннă приоритетлă наци проекчĕсем ăнăçлă пурнăçланаççĕ, пирĕн патшалăхăн мăнаçлăхĕшĕн хăвачĕ таврăнаççĕ: çынсем хăйсен вăйне шанма пуçларĕç.*

*Эпир Владимир Путина пирĕн республикăна вису хут килсе Чăваш Енĕн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне пысăк хак панăшăн тав тăватпăр. Ку пирĕншĕн пысăк чыс, шанăç тата çав вăхăтрах çĕршыв малашлăхĕшĕн тăрăшмалли пысăк яваплăх.*

*Эпир хамăрăн гражданла позици çинчен пĕлтерсе Чăваш Енре пурăнакансене çĕршыв лидерĕн – Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Владимирович Путинăн – экономикăпа тăнăçлăха çирĕплетессишĕн, халăхăн пурнăç шайне ӳстерессишĕн тăвакан ĕç-хĕлне малалла тăсма чĕнсе калатпăр.*

*Пире вăйлă та чечекленекен Раççей кирлине эпир туйса-пĕлсе тăратпăр.*

***ЧĂВАШ ЕН ТĂНĂÇЛĂХĔШĔН, ПУТИН ÇУЛ-ЙĔРНЕ МАЛАЛЛА ТĂСАССИШĔН!***

## ЯЛСЕНЕ ЫТЛАРАХ ПУЛĂШМАЛЛА

РФ Патшалăх Думин суйлавĕ умĕн иртнĕ созыври депутатсем республика халăхĕшĕн мĕнле ĕçсем тунине тишкереççĕ. Вĕсемпе суйлавçăсене паллаштараççĕ.

Ĕнтĕ эпĕ çамрăк çын мар, пурнăç хăш кукăрпа пынине лайăх куратăп. Чăваш Енри ялсене çут çанталăк газĕ кĕртнĕ, начар-и, лайăх-и – вĕсене çăл шывĕпе тивĕçтерес ĕç пырать, 2008 çулта мĕн пур яла хытарнă çулпа çыхăнтарма тĕллев лартнă, Шĕнерпуçĕнче сысна комплексĕ, Кӳкеçре физкультурăпа спортăн «Улăп» комплексне хута ячĕç. Пенсионерсене, инвалидсене пенси, пособи, уйăхри укçа тӳлевĕ вăхăтра парса тăраççĕ. Çакнашкал ырă тĕслĕхсем татах пур. Пĕтĕмĕшпе пурнăç майĕпен лайăх еннеллех улшăнать темелле.

Çапла, 1990-мĕш çулсенче хуçалăхсен выльăх шутне нумай чакарма тиврĕ, çĕрсене çулсерен акса хăварайми пулчĕç, техника кивелсе çитнĕ, ял çыннисенчен нумайăшĕ ĕççĕр, çивĕч ыйтусем татах пур. Анчах хальхи влаç вăхăт иртнĕçемĕн вĕсене татса парасса шанас килет. Чи малтанах ял хуçалăх тата промышленность таварĕсен хакĕн пысăк уйрăмлăхне пĕтермесĕр ялсене малалла аталантараймăпăр. Пуринчен ытларах йышпа суйланакан партирен патшалăх политикине яла çывăхлатма ыйтас килет.

Ф.КОНСТАНТИНОВ.

## МУЗЕЙ ПУРРИ – ТЕЛЕЙ

Тăван Ен культура урокĕсем таçта та илсе çитереççĕ. Район 80 çул тултарнă май, Ишек шкулĕнчи 5-6-мĕш классенче вĕренекенсемпе вырăнти краеведени музейĕнче пултăмăр. Пирĕн тĕллев – Марка тăрăхĕнчен тухнă пултарулла çынсемпе паллашасси.

Ишекри музей ертӳçи Е.П.Смирнова пире хаваспах кĕтсе илчĕ. Мĕн чухлĕ çĕнни. Стендсем улшăнсах пыраççĕ. Вĕренӳре кирлĕ материал тем чухлех тупма май пур кунта. Марка тăрăхĕнчен тухнă паллă çынсене каласа та пĕтерес çук! Ачасен куçĕсенче – тĕлĕнӳ, пуçĕсенче вара пуласлăх çуралать. Хĕрачасем Светлана Михайлова-Ефимова пек артист пуласшăн ахăр, арçын ачасене Владимир Мешков картинисем тыткăнларĕç. Ыйтса пĕлмелли питĕ нумай. Вĕсене пурне те Екатерина Павловна васкамасăр тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Çакăн пек музей Ишек тăрăхĕнче пурри – чăн-чăн телей. Ăна татах пуянлатасчĕ.

Р.НИКИТИНА.

Ыйту-хурав

## ПРИВИВКА ТУТАРМАЛЛА

***Мана кашни çулах грипп ерет. Унпа чирлес мар тесен мĕн тумалла-ши?***

В.ВАСИЛЬЕВ.

Начар иммунитетлă çынсене грипп питĕ нушалантарать. Вăл организма сиенлетме пуçласан пуç мимине юн кайнипе, пневмони, плевра эмпиемин сарăлнипе, чĕре-ӳпке хытă сусăрланнипе çын вилсех кайма пултарать. Çавăнпа гриппа чирлессе кĕтмелле мар, грипп вирусĕпе кĕрешме иммунитета çирĕплетмелле. Çакна вакцинаци меслечĕпе те пурнăçлаççĕ. Прививка тутарнă çын малашне гриппа чирлесрен 70-90 процент гаранти илет. 2007-2008 çулсенче республикăра пурăнакансен 20 процентне прививка тума палăртнă.

## ЮБИЛЕЙПЕ САЛАМЛАТЬ

Çырмапуç ял администрацийĕ çумĕнчи ветерансен организацийĕн ертӳçи Р.А.Васильева пенсионерсене юбилейпе саламлать. Чăрăшкассинчи Т.Н.Евсеева тата Л.Н.Прокопьева 70 çул тултарнă. Татьяна Николаевна ĕçлеме пăрахман-ха: ялти çуртсене тирпейлесе тăрать. Лилия Назаровна «Паха тĕрĕ» фабрикăра вăй хунă. Ветерансен ертӳçи вĕсене килĕсене çитсех саламланă, тав хучĕ тата парне панă.

С.СЕРЕГИН.

## ӲСТЕРМЕ ПАЛĂРТНĂ

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче РФ Президенчĕ В.В.Путин Указ кăларнă, кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен ĕç пенсийĕн никĕс пайне – 1560 тенкĕ, 2008 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен 1794 тенкĕ тума йышăннă. Килес çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен федераци çăмăллăхçисен кашни уйăхри укçа тӳлевне те ӳстерĕç.

С.СЕРГЕЕВ.

## РАЙОНĂМĂР 80 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ

# КĂШТАХ ИСТОРИ

▪ 1927 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче Чăваш АССРĕн Ĕçтăвкомĕ республикăра 17 район, çав шутра Шупашкар районĕ, туса хума йышăннă. Малтанхи çулсенче райцентр Шупашкарта вырнаçнă, района пирвай 3 вулăс кăна кĕнĕ.

▪ 1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче район Совечĕн I съезчĕ уçăлнă. Вăл ĕçтăвком председателĕ пулма И.Н.Яштайкина суйланă. Унта 136 делегат хутшăннă, съезд Чăваш академи драма театрĕнче иртнĕ, 5 кун ĕçленĕ.

▪ 1935 çулта республикăра çĕнĕ 7 район, çав шутра Ишлей районне те, йĕркеленĕ. Ăна маларах Шупашкар тата Элĕк районĕсене кĕнĕ ялсене панă.

▪ 1935 çулта район 30 ял Советне (халĕ 17 ял тăрăхĕн администрацийĕ) тата 122 яла пĕрлештернĕ (халĕ 171).

▪ Çав çул Ишлей районне 30 ял Совечĕ, 138 ял кĕнĕ. Лаша – 5754, ĕне – 5998, сурăх-качака – 28686, сысна 13293 пуç шутланнă. 58 ферма. Кашни лаша пуçне сухалакан 7,2 га çĕр тивнĕ.

▪ 1936 çулта районта 5449 лаша, 6073 ĕне, 27482 сурăх, 12104 пуç сысна ĕрчетнĕ. Кашни лаша пуçне сухалакан 6,86 га çĕр тивнĕ. 118 колхоз пулнă. Хресченсем 7630 уйрăм хуçалăх тытнă.

▪ 1939 çулта районта кашни гектартан тĕш тырă 9,4 центнер çеç пухса кĕртнĕ. 25 шыв арманĕ, 55 çил арманĕ, çăм таптарттармалли машина – 10, тимĕрçĕ лаççи – 46, электростанци – 2, кирпĕч савăчĕ – 2, çăкăр савăчĕ – 4, ытти вак предприятисем ĕçленĕ.

▪ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине районтан çĕр-çĕр çын тухса кайнă, нумайăшĕ тăшманпа çапăçса наградăсем илме тивĕçлĕ пулнă. Н.П.Карпеевпа И.Н.Герасимов Совет Союзĕн Геройĕ пулса тăнă.

▪ 1946 çулта район кашни гектартан тĕш тырă 5,6 ц çеç туса илнĕ, 1947 çулта – 10 ц. 1950-мĕш çулсенче тухăç ӳссех пынă. 1970-1980 çулсенче вăл 20-25 ц-ра çитнĕ.

▪ Шупашкара газ пăрăхĕ илсе пыма район территорийĕнче ĕçсем 1957 çулта пуçланнă.

▪ 1959 çулта Кӳкеçре общетсвăлла мунча уçнă. Харăсах унта 15 çын кĕнĕ, билечĕ 2 тенкĕ тăнă.

▪ 1959 çулта Ишлей районне пĕтернĕ, ăна Шупашкар районĕпе пĕрлештернĕ, унăн ертсе пыракан влаç органĕсене йĕркеленĕ.

▪ 1959 çулта Ишлейри юсав-техника станцийĕнчен машинăсем тăвакан завод туса хунă. 1967 çултанпа вăл – Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕ.

▪ 1961 çулта Ишлейре «Надомница», 1959 çулта кирпĕч завочĕ, 1975 çулта газ компрессорĕн станцийĕ, 1960 çулта Алькешре «Паха тĕрĕ» пуçланса кайнă.

▪ 1962 çулта ЧАССР Аслă Канашĕн йышăнăвĕпе республикăра 9 ял районĕ, çав шутра Шупашкар районĕ, туса хунă. Пирĕн района Сĕнтĕрвăрри районĕн çурринe, Элĕк районĕн 3 ял Советне тата Красноармейски районĕн пĕр ял Советне кĕртнĕ.

▪ 1965 çулта ял тата промышленность районĕсене пĕтерсе 18 район, çав шутра Шупашкар районĕ, туса хунă. Унтанпа вăл пысăк административ-территори улшăнăвĕ тӳссе иртермен.

### СЪЕЗДА ХУТШĂННĂ




***Çак фото ӳкерчĕке 1929 çулта тунă. Чăваш кĕпипе саркаланса лараканни – Анаткасра 1898 çулта çуралнă, Тĕкĕрçе (Çĕнĕ Шупашкара кĕрет) качча тухнă Мария Морозова. Вăл – Советсен пĕтĕм Раççейри 14-мĕш тата пĕтĕм Союзри 5-мĕш съезчĕсене хутшăннă Чăваш АССР делегацийĕн йышĕнче. Унăн тăван хĕрĕ, 1925 çулта çуралнă Июния Петровна, каласа панă тăрăх, вăл пĕтĕм Союзăн Ĕç Тăвакан Комитечĕн членĕ те пулнă, кĕсйинче пĕтĕм Союз старости М.Калинин алă пуснă удостоверени чиксе çӳренĕ. Мускава М.Морозована ахальтен яман. Вăл социализм тăвас ĕçе питĕ хастар хутшăннă, ялта 1930-мĕш çулсенчех ача сачĕ уçнă. Ача чухне темиçе класс пĕтернĕ кăна пулсан та хут пĕлменлĕхрен çăлăнассишĕн кĕрешнĕ тапхăрта училищĕре юридици пĕлĕвĕ илнĕ, кайран судьяра, нотариусра ĕçленĕ. 1970 çулта вилнĕ.***

## УЙĂХРИ ТӲЛЕВ

Уйăхри укçа тӳлевĕ (ЕДВ) хальхи вăхăтра 1941-1945 çулсенчи тыл ĕçченĕсен – 575, ĕç ветеранĕсен – 315, Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсен – 315, таса ячĕсене тавăрнисен – 1495, политика репрессийĕсене пула шар курнисен 1260 тенкĕпе танлашать. Тӳлеве районти халăха социаллă хӳтлĕх кӳрекен пай урлă 3865 ĕç ветеранĕ, вăрçă çулĕсенчи 821 тыл ĕçченĕ, Чăваш Республикин 21 ĕç ветеранĕ (документсем тăратнăçемĕн ку категори те йышлансах пырать), таса ятне тавăрнă тата политика репрессийĕсене пула шар курнă 36 çын илсе тăрать.

А.КОНСТАНТИНОВ,
районти халăха социаллă хӳтлĕх кӳрекен пай пуçлăхĕ.

## УПРАВЛЕНИ УРЛĂ

Уйăхри укçа тӳлевне (ЕДВ) РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ урлă та параççĕ. Кашни уйăхра вăрçă инваличĕ – 2472, вăрçă участникĕ – 1854, вăрçă çулĕсенче тапăнса кайнă çарсен йышне кĕмен чаççенче хĕсметре тăнă çын – 741, салтак арăмĕ тата ачисем – 741, Аслă Отечественнăй вăрçа мар, ытти çапăçусене хутшăннă çын – 1360, 1-мĕш ушкăнри инвалид – 1730, 2-мĕш ушкăнри – 1236, 3-мĕш ушкăнри – 989, стеньсĕр инвалид 618 тенкĕ (пусĕсемпе каламăпăр) илсе тăрать.

А.ИСАЕВА,
РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.

## МАЛАЛЛАХ КАЯТПĂР

***Ульян ИВАНОВ, Раççей пенсионерĕсен союзĕн районти полномочиллĕ представителĕ:***

– Эпĕ ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн пĕрремĕш, каярахпа КПСС Шупашкар райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ, район депутачĕсен Совечĕн ĕçтăвкомĕн председателĕ пулнă çулсенче район хăватне ӳстерессишĕн вăя патăм. 1950-1960-мĕш çулсенче районта производство объекчĕсем нумай лартрăмăр. Вĕсем часах продукци пама пуçларĕç. Социаллă пĕлтерĕшлĕ çуртйĕр те чылай тунă. Сăмахран, Кӳкеçре пурăнмалли çуртсем хута ятăмăр. Çакăншăн çынсем питĕ савăннине астăватăп. Ун чухне фермăсем, гаражсем, йĕтемсем, ытти çуртсем сахал мар çĕкленсе ларчĕç. Кĕскен, ӳсĕм çулĕсенче ĕçлеме тӳр килнĕ манăн. Хальхи тапхăра та эпĕ çав çулсемпе танлаштаратăп. Халĕ те район çултан çул малаллах талпăнать, ӳсĕмсем те пур. Паллах, çăмăл мар, йывăрлăхсем пайтах. Анчах урапа малаллах каять. Çакă паха.

## ÇАМРĂКСЕМ ЛАЙĂХ ĔÇЛЕÇÇĔ

Нумаях пулмасть республика шайĕнче предприятисемпе организацисенчи чи лайăх çамрăксен Канашĕ камăн пулнине тĕрĕслерĕç. Висĕ номинацире иртрĕ «Профи 2007». Пирĕн районтан унта Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕ хутшăнчĕ.

Заводра çамрăксем нумай ĕçлеççĕ, çавна май çулталăка яхăн каялла вĕсем хăйсем патĕнче çамрăксен Канашĕ йĕркелерĕç. Мĕнех, лайăх ĕçлет темелле. Вĕрентӳ управленийĕн çамрăксемпе ĕçлекен специалисчĕ пĕлтернĕ тăрăх, республикăри конкурсра вĕсем «Наукăпа техника пултарулăхĕ» номинацире пĕрремĕш вырăн йышăннă. «Профи-2007» вара Çĕмĕрлери ятарлă машинăсен завочĕн çамрăксен Канашĕ пулнă.

А.СУСМЕТ.

**Вăт, кулăш...**

## ӲКЕРНĔСКЕРСЕМ

Район йĕркеленсенех пĕр ревизора тĕп хуларан Кӳкеçе тĕрĕслеме янă. Тĕрĕслев ĕçне пĕтерсенех колхоз председателĕ ăна Шупашкара леçме хушать. Ревизор тăрантас çине кăмăллăн хăпарса ларать те: «К-к-ай-айрăмăр!» – тет. «Ш-ш-шуп-ашкарах-и?» – ыйтать яваплă ĕç шанса панăшăн пит хĕпĕртенĕ конюх. Çакна илтсенех чиновник ăна какăрĕнчен ярса илет: «Э-эс м-м-ĕ-мĕ-мĕскер йĕйĕ-йĕкĕлтешен?!» Кантурçă патак çитересрен хăранипе конюх хыпаланса ӳкет: «С-с-по-покой-койно! М-м-а-на х-х-хама та-а в-в-иç-ççĕре ч-ч-у-хне к-к-ă-ăмака ç-ç-и-инчен ӳ-ӳ-ӳкернĕ!..» – тет.

**Кăларăма Ю.МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

## ТĂВАН АННЕ ЮРАТĂВĔПЕ ӲСТЕРЧĔ

Чанкасси ялĕнчи Нина Петровна Пучкова çемье çавăрсан мăшăрĕпе ача-пăчалла пулса телей тупма ĕмĕтленнĕ. Пĕрле нумаях та пурăнаймаççĕ çамрăксем, упăшкине, чăпта пуçтараканскере, тавар тухманнипе тĕрмене хупаççĕ. Ăна кĕтсе çулсем иртеççĕ, мăшăрĕ вара аякран та хыпар ямасть. Акă, пĕррехинче ăнсăртран, пӳрт çунă чухне, алла унăн мăшăрĕ аппăшĕ патне янă çыру лекет. Хăй авланни çинчен пĕлтерет вăл унта. Нинук чĕрине сасартăк сăнă тăрăннăн туять.

Ăçта каяс-ха унăн? Тăван килĕнче шăллĕн çемйине килсе тĕрĕнесси? Хăйсен ялĕнчех ампар туянать, вăрçă хыççăнхи çулсенче пĕчченех хĕрарăма пӳрт лартасси çăмăл мар пулин те, хăвăн кĕтес пулни паха. Ĕçлеме ӳркенмест Нинук. Колхоз ĕçĕнчен пĕр кун та юлмасть вăл. Яш пилĕклех торф кăларма та çӳренĕ, вăкăр выраннех ĕçленĕ. «Искра» колхозра дояркăра тăрăшнă.

Çемье пурнăçĕ ăнмарĕ унăн. Ĕмĕре хăр тăлăххăн пурăнма хăрăк турат-и мĕн вăл? Ача çуратсан та ял халăхĕшĕн шăл çемми пулас çукчĕ: качча кайса килнĕ, вăтăр урлă каçрĕ ĕнтĕ. 1958 çулта Валерăна пурнăç парнелет. Пурăна-киле арçын тупăнать, киле кĕртет. Анчах çĕнĕ упăшка Нинăн ывăлне юратмасть. Çавна пулах килте хирĕçӳсем пуçланаççĕ. Паллах, хĕрарăм ачапа арçын хушшинче ывăлне суйлать. Хăй тепĕр ача кĕтет пулин те арçынне хăваласа ярать. Хăйне çеç шанма хăнăхнă вăл. Чун пулсан чул хушшинче те çитĕнетех. Хĕр çуратма, пулăшакан тума ĕмĕтленет. Чăнах та, хăй кĕтнĕ пекех хĕр пĕрчи çуралсан еплерех савăнать вăл! Текех телейлĕ пулма нимĕн те чăрмантармĕ вĕсене. Анчах инкек алăк урати патĕнчех кĕтсе тăнă иккен. Пепки икĕ эрнене çитсен шатра чирĕпе аптăраса ӳкет. Больницăра сивĕре çарамаслантарса сипленĕ пирки пушшех те йывăрланать. Килне Нина вилĕ ачапа таврăнать. Валера та йăпатаймасть амăшне. Çав тери хытă кулянниpе хĕрарăм ухмаха тухас патне çитет. Хăлхинче пĕрмай ача сасси, Ункă шывĕн леш енче макăрать пек. Куçне хупать те – ача сиктерни курăнать. «Чĕрĕлмех çĕр айне турăмăр пуль, вилменех вăл. Мана чĕнет, авă»,– каласа парать аппăшне. «Капла пĕтетĕн-иç, Нинук, атя пытарнă çĕре кайса килетпĕр, эппин»,– тет лешĕ хирĕç. Çапла аппăшĕпе пĕрле çăва çине çитеççĕ, куççулĕпе чыхăна-чыхăна виле шăтăкне чавса пĕчĕк чĕркем тупса кăлараççĕ. «Чăнах та вилнĕ-çке, акă, кур, пичĕ епле сĕвĕнет, кĕпийĕ çĕрсех кайнă»,– тин ĕненет Нина.

...Çулла Шăпачав ялне, мăн аккăшĕ патне, хăнана кайсан çулталăк çурăри Иринăна курать вăл. Ача ун патне упаленсе пырать. Чĕрçийĕ çине илет ăна. Ачашлăх çитменнипе Нинук çумне тĕршĕнет хĕр пĕрчи. «Ашшĕ-амăш ĕçре пуль, сана утьăкка сиктерме хăварнă ĕнтĕ»,– тет мăн аккăшне. Ачана пăрахса хăварса, упăшкине пĕлтермесĕр амăшĕ Ленинграда качча тухни çинчен хурланса каласа парать мăн аккăшĕ. Унăн ывăлĕ, Ирăн куккăшĕ, ачана çав тери килĕштермест-мĕн. Ытлашши чун иккен вăл кунта. Вилтĕр тесе пăр кайнă чухне Ункă шывне пăрахнă. Вăйлă юхăмпа йывăç кĕпере татса кайнă ишĕлчĕк çине лекет ача, çынсем курса ăна çăлса хăвараççĕ.

«Мана памĕç-ши ку ачана? Эпĕ ăна тем пек хытă юратса пăхса çитĕнтерĕттĕм». Ирăн амăшĕ пысăк хуларан таврăнсан ачана хăех ăсатса ярать. Пăхманнипе утайман, рахит чирне кайнă Ира çакăнтан Нинăн хĕрĕ пулса тăрать. Ача часах уралантăр тесе хусканусем тутарать, урисене сăтăрать, ирĕн-каçăн шыва кĕртет. Амăш юратăвĕпе сиплет ачине.

Халĕ Нина Петровна 83 çул урлă каçрĕ. Нумай çынна ырă тунă вăл. Чапшăн-хисепшĕн çунман. Шăпи пуçран шăлман пулсан та йывăр тесе нăйкăшнине унран никам та илтмен. Ира хăй те кукамай, асанне пулса тăчĕ. Вăл çемйипе Чăрăшкассинче пурăнать. Ăна усрава илсе тăван анне юратăвĕпе юратнăшăн, телейлĕ ачалăх парнеленĕшĕн, яланах çумра пулса ырă кӳнишĕн ĕмĕр тăршшĕпех тав тăвать вăл Нина Петровнăна.

А.ИЗМАН.

Пушар хăрушсăрлăхĕ

# КИВĔ ÇУРТСЕНЧЕН – ИНКЕК

***Çулăм алли вăрăммине, вăл пĕр ярса илсен тĕп тумасăр хăйĕнчен вĕçертменнине калама кирлĕ мар. Çуртсене, вăрмансене, çавăн пекех çынсене пĕр шелсĕр пĕтернĕ тĕслĕх пĕрре мар пулнă. Кăçал çеç е ваттисен çурчĕ, е больница, е студентсен общежитийĕ тата ытти те çунса тем пысăкăш инкек патне илсе çитернине телевизорпа нумай куртăмăр. Çунас мар тесе чӳречесенчен сикse ӳксе вилнисене курма çăмăл мар. Шкулта вĕренекенсем те вут аллине çаклансан... Сĕнтĕрвăрри районĕнче миçе теçетке вĕренекенпе вĕрентекен çунса вилнине вун-вун çул иртсен те манмастăп. Ун пеккинчен Турă хăтартăр. Пирĕн районти шкулсенче пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе мĕнле ĕçлеççĕ-ха? Çак тата ытти ыйтусем çине паян патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн начальникĕ В.И.МАТВЕЕВ хуравлать.***

– Шкулсене илсен, чăн та, пирĕн тата тимлĕрех пулмалла. Ачасемшĕн аслисем яваплă – çакна манса каяс марччĕ. Çулталăк тăршшĕпех инспекторсем шкулсенче пулма тăрăшаççĕ. Çуллахи лагерьсем пуçланиччен тепĕр хут унта çитсе килĕпĕр. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕччен çулсеренех тĕплĕ тĕрĕслев иртернĕ.

***– Апла пулсан пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе шкулсенче лару-тăру мĕнле-ха?***

– Тĕрĕслев кăтартса пачĕ – вĕренӳ заведенийĕсен ертӳçисем пурте яваплăха туйса ĕçлеççĕ. Акă, Анат Кĕнер, Ишек, Çĕньял, Шăмăш, Салапайкасси шкулĕсенче пушар тухнине систерекен сигнализаци çук. Нумай шкулти çивитти каштисене çулăмран сыхлакан составпа сĕрсе тухман. Кашни шкул территорийĕнчех шыв тултарнă çĕр айĕнчи пысăк савăтсем пулмалла. Шкулĕ пысăк пулсан, ыйтнипе иккĕ таранах кирлĕ вăл. Шел, 18 шкулта çакна пăхăнмаççĕ. Вут аллине тăсма пуçласан пĕр витре шыв та укçаран хаклă пулнине ăнланасшăн мар çав эпир.

***– Çулталăка яхăн каялла Чăваш Енри вĕренӳ министрĕ шкул территорийĕсенче вырнаçнă хуçасăр, тата "ĕçлемен" йывăç çуртсене сӳтмелле тесе вĕренӳ учрежденийĕсене çырусем ярса панăччĕ. Çакна шкулсенче мĕнлерех пурнăçлаççĕ-ха?***

– Эп сире халь пĕр цифра çеç калатăп, вара хăвăрах ăнланатăр. Пирĕн районта шкулсен территорийĕсенче йывăçран тунă, 16 кивĕ çурт ларать. Вĕсенчен хăшĕсем учреждени балансĕ çинче те тăмаççĕ, е усă курмаççĕ пулсан та, шутран кăларман (списать туман). Кирлĕ мерăсене вăхăтра йышăнсан аван пулĕччĕ.

***– Çакă инкек патне илсе çитерме пултармасть-и?***

– Шар куртăмăр ĕнтĕ. Министерство тата патшалăх пушар надзорĕн ыйтăвне пурнăçламаннипех кăçал çеç икĕ пушар тухрĕ. Акă, сентябрĕн 20-мĕшĕнче Шăмăш шкулĕн кивĕ йывăç çуртĕнче çулăм алхасрĕ. Электропроводкăна пула инкек патне çитрĕç унта. "Ĕçлемен" çурта темиçе хутчен те сӳтмелле тенĕ. Пĕр хăлхаран кĕртсе тепĕр хăлхаран кăларса янипех пулчĕ вăл. Тепĕр пушарĕ октябрĕн 12-мĕшĕнче Атайкасси шкулĕн Явăшри филиалĕнче сиксе тухрĕ. Вĕренмелли çуртран инçех мар вырнаçнă пĕр хутлă икĕ кивĕ çурт çĕрпе танлашнă. Мĕн калама пулать, пушар тухнă самантра иккĕшĕнче те хуралçăсем вырăнта пулман. Вăт çапла ĕçлетпĕр эпир...

***– Тавах калаçушăн.***

А.СУСМЕТ.

Систерчĕç...

# ПĂРĂХА ТЕМ ТЕ ПĔР ПĂРАХМАЛЛА МАР

***Тунти кун редакцие телефонпа Çырмапуç ял тăрăхĕнчи Чăрăшкассинчен шăнкăравларĕç, Çамрăксен урамĕнчи каяш пуссинчен таса мар шыв палкаса тухни çинчен пĕлтерчĕç. Çав кунах вырăна тухса кайрăм, Çамрăксен урамĕнче пултăм, пусăран хура шыв юхнине куртăм, Çырмапуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе С.А.Ванюшкинпа калаçрăм.***

"Çамрăксен урамĕнчи каяш пăрăхĕ икĕ хутлă çуртсенчи хваттерсене пурăнакансем туалет шăтăкне çĕтĕк янипе тулса ларнă, çавна пула хура шыв тулса пусă çăварĕнчен каять, – терĕ Сергей Алексеевич. – Кун пекки пĕрре çеç мар пулнă. Каяш пăрăхне ăпăр-тапăр ямалла мар".

***"Йĕркене кĕртме тăрăшатăр-и?"***

"Пăрăхра ларнине шăтарса малалла ярас тесе иртнĕ эрнерех тивĕçлĕ организацисем тăрăх çӳреме пуçларăмăр, – хуравлать С.А.Ванюшкин. – Халиччен Чăрăшкассинчи хваттерсене "Водоканал" пăхса тăнă, вăл панкрута тухнипе "Хевеш" обществăпа килĕшӳ тăватпăр. Вăл Чăрăшкассисене хуларан каяш пăрăхне вăйлă пусăмпа хĕссе тасатакан автомашина ярать".

***"Çав хваттерсенче пурăнакансем тата коммуналлă тăкаксене вăхăтра саплаштарса пыраççĕ-и?"***

"Çийĕнчех тӳлесе пыман çемьесем сахал мар, хăшĕ-пĕрин парăмĕ 3-4 пин тенкĕ, – терĕ администраци пуçлăхĕ. – Хăйсем хваттерсене пăхса тăраканран çирĕп ыйтаççĕ, çакăн пек кăлтăк сиксе тухсанах ӳпкелеме пăхаççĕ, анчах коммуналлă тăкаксемшĕн вăхăтра тӳлемеççĕ".

***Вăт, çапла. Тепĕр чухне влаçран карланкă çурсах хытă ыйтатпăр, анчах хамăртан вара çавнашкалах ыйтатпăр-и-ха?***

Ю.ЮМАН.

Çул çитменнисем патĕнче

# 13-15 ÇУЛХИСЕМ ЭРЕХ ĔÇСЕН...

***Саккуна хирĕçле ĕç тунă чухне уншăн явап тытмалли çинчен шухăшлаççĕ-ши? Çывăх çыннисене, ашшĕ-амăшне кăштах та пулин шеллеççĕ-ши? Киревсĕр ĕçсем тăвакан çул çитмен ачасене çак ыйтусене парас килет. Район администрацийĕ çумĕнче йĕркеленнĕ çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссин ларăвĕнче кашнинчех пулма тăрăшатăп та, пуçра пĕр шухăш çеç явăнать: пĕчĕккĕ, хăшĕсен амăш сĕчĕ те типе çинчен кайман – ăçтан çакăн пек чунсăрлăх вĕсенче? Хĕнеççĕ, вăрлаççĕ, укçа туртса илеççĕ, чи хуммяхантараканни вара – ĕçеççĕ. 13-15 çулхи арçын ачасем çинчен протокол çырнă чухне «100 грамм çеç эрех ĕçнĕ» тесе пĕлтерни канăçсăрлантарать. 100 грамм мар, чĕптĕм те ăша ямалла мар вĕсен – çакна ăнланасшăнах мар паянхи хăш-пĕр ача.***

Моççакассинчи Г. та симĕс çĕленпе туслă пулас. Сентябрь уйăхĕнче вăл Куславкка районĕнчи юлташĕн çуралнă кунне кайсан пĕр лавкка патĕнче ӳсĕрле намăс сăмахсемпе перкелесе тăнă иккен. Комисси членĕсен умне пырса тăрсан каччă малтанах хăй йăнăш çул çине тăнине ăнланмарĕ ĕнтĕ. Ларакансем çине пăхса йĕкĕлтевлĕн кулса çеç тăчĕ. Председателĕн çумĕ Г.Николаев çамрăка мĕнле статьяпа айăпланине сасăпа вулаттарсан часах йăл кулă питрен çухалчĕ...

ПĔР ÇУЛТАЛĂКРА 3 ХУТ ЛЕКНĔ

Кӳкеçри Ф.-на Гиннесс кĕнекине те кĕртме юрать темелле. Условнăй йĕркепе айăпланнăскер хальхинче те комисси умне тăчĕ. Çак çулта март уйăхĕнче пĕрремĕш хут пакунлисен аллине çакланать. Хĕненĕ, çаратнă вăл, сентябрь уйăхĕнче телефон вăрланă. Хальхинче комисси умне вăл хулара икĕ хутчен ӳсĕр çӳренипе, милицисем протокол çырнă, лекет. Нумаях пулмасть Çĕрпӳре темĕнле киревсĕр ĕç те тунă иккен. Унпа Çĕрпӳри шалти ĕçсен пайĕ интереслене пуçланă.

ЯТАРЛАСА КАЛАÇМА ЧĔННĔ

Çак кун комисси умне Кӳкеçри 27-мĕш номерлĕ училищĕре вĕренекен виçĕ каччă тăчĕ. Мĕнпе айăпланнăха вĕсем? Акă, К. занятисене çӳремест. Ним çук çĕртен 14 кун сиктернĕ вăл. «Çăпан тухрĕ, унран сывалтăм эпĕ», – тет халь каччă, анчах нимле документ та тăратаймасть. «Комисси ирĕк парсан пĕр шухăшламасăрах училищĕрен кăларса яма пултаратпăр», – тет комиссие килнĕ директорăн çумĕ. Ларăва пухăннисем ачана шеллерĕç, айăпне тӳрлетме шанăç пачĕç.

С. вара иккĕмĕш уйăх занятисене йĕркеллĕ çӳремест. Директор çумĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак юлашки икĕ эрне вăл икĕ кун çеç училищĕне килнĕ, унта та юлашки уроксенчен тарнă. «Условнăй айăпланнăскер вăл пирĕн. Кашнинчех ăна уроксене çӳреме ӳкĕтлетпĕр. Паян ятарласа калаçма тесе чĕнсе илтĕмĕр. Енчен те хăйсем клеткăна çакланас тесе тăрăшаççĕ пулсан... Эпир ăна çӳлелле туртатпăр, вăл хăйне хăй аялалла сĕтĕрет. Çитет, миçе çул ĕнтĕ пĕчĕк ачана пăхнă пек пăхса тăратпăр ăна. Тепĕр йăнăш утăм – тĕрмене çул уçă пулĕ», – терĕç пакунлисем.

Е. те училищĕре юлашки хут сентябрĕн 18-мĕшĕнче пулнă. «Хĕненĕ ăна унта, çавăн хыççăн тăрук çӳреме пăрахрĕ», – тет амăшĕ. Каччă малалла уроксенче пулма сăмах пачĕ.

Çак кун комисси 8 протокол пăхса тухрĕ. Унсăр пуçне условнăй майпа айăпланнă 2 ачана ятарласа калаçма чĕннĕ. Пурĕ çичĕ штраф хучĕç комисси членĕсем, пĕрне асăрхаттарса хăварчĕç.

А.АЛИНИНА.

Кĕске хыпарсем

# ЧЕМПИОНСЕМ - ПИРĔН

Шашкăлла выляс енĕпе республика ăмăртăвĕнче Тутаркасси ял тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Г.А.Мочалов пирĕн района хӳтĕленĕ, пĕрремĕш вырăн йышăннă. Хĕрарăмсен хушшинче Çырмапуç ял тăрăхĕнчи ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн ертӳçи Р.А.Васильева чемпион пулса тăнă.

Ю.СЕРГЕЕВ.

# ЯЧĔ ТУХНĂ

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Шорккари клубра çамрăксем пуханнă, ял администрацийĕнче ĕçлекенсем, тусĕсем тата тăванĕсем Алексей Осипова çара ăсатнă май çар тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама ырă суннă. Сарапакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В.Ильин ăна парне панă. Ялтан кĕркунне тата темиçе çамрăка Раççей çĕршывне хӳтĕлеме илеççĕ. Пикшикри Алексей Козин вара тин кăна салтак аттине хывнă.

Ю.МИХАЙЛОВ.

# 50 ÇУЛПА

Çырмапуç ял тăрăхĕн администрацийĕн специалисчĕ В.Н.Иванова хăйĕн 50 çулне чаплăн паллă тунă. Ăна ял çыннисем, тăванĕсем саламланă. 1994 çултанпа вăл ял администрацийĕнче тар тăкать, çынсен ыйтăвĕсене вăхăтра татса пама тăрăшать. Ун ĕçĕпе ял администрацийĕн пуçлăхĕ С.А.Ванюшкин кăмăллă.

В.НИКОЛАЕВ.

Килти хуçалăх

# ПАН УЛМИПЕ ТАТА ПĂРĂÇПА КАБАЧОК

Пăлхар пăрăçне ункăпа, кабачока касăкпа, пан улмине тăрăхла вакласа маринадра 30-35 минут тытмалла. ***Маринад: пан улми уксусĕ, шыв, пыл. 1 л шĕвеке – 30 г тăвар.*** Банкăсене тултарса вĕрекен маринад ямалла та хупмалла.


# ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**Закупаем дорого лом цветных металлов, в т.ч. аккумуляторы. П. Кугеси, ул. Шоссейная, д.3, Строительный двор. Лицензия Г828722. Т.: 48-02-88.**

**Хĕл касçă, февральте пăруламалли, хурапа шурă тĕслĕ нетель сутатăп. Тел.: 2-48-38.**

**Участники** долевой собственности Авельев Г.Л., Иванова Ф.Ф., Авандеева К.Ф., Анискова С.Г. (по 0,0700 га), Фёдоров В.В. и Фёдоров О.Г. (по 0,0350 га) сообщают о намерении выделиться земельными долями (пастбище) из землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района, земельные паи расположены севернее д.37 по ул. Крестьянская д. Адыльял.

Возражения направить письменно по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Участники** долевой собственности на землепользование СХПК им. И.Г.Кадыкова Иванова Луиза Матвеевна, проживающая по адресу: ЧР, Чебоксарский район, с.Синьялы, ул.Центральная, д.24 и Мирошниченко Алина Владиславовна, проживающая по адресу: ЧР, Чебоксарский район, с.Синьялы, ул.Центральная, д.10, сообщают о своем намерении выделиться из земель СХПК им. И.Г.Кадыкова земельной 2 доли по 2.15 га по следующим ориентирам севернее от складов ОАО «Волжанка»: 1) 260 м - севернее от овощехранилища ОАО «Волжанка»; 2) 370 м - севернее от склада ОАО «Волжанка». Свои возражения присылайте по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**11 уйăхри хура тынашка сутатăп. Тел.: 2-34-62.**

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,15 га с кадастровым номером 21:21:12 05 01:0062, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Васильсасы, ул. Садовая (земли населенных пунктов), для огородничества.

Адрес: *пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского района. Тел.:(8240) 2-15-92.*

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» №124 от 31 октября 2007 г. в объявлении о предоставлении в аренду заменить слово «в аренду» на «в собственность».



ТĂВАН ЕН («КРАЙ РОДНОЙ») Чебоксарская районная газета

Учредители: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, РГУ "Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен",

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем, отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 13.11.2007 г. в 16 час. 00 мин. Тираж 2130. Заказ № Индекс газеты - 54820.